Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 121 N (4690) | *1998 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 23-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

## *Хулари электросетьре - 20 çул*

*Хулари электросеть Тверсковсемшĕн тăван предприяти пулса тăнă. Çемье пуçлăхĕ Валерий Павлович 15 çул хушши хулари электросетьре автобус водителĕ пулса ĕçлет, хула çыннисене электроэнергипе ăнăçлă тивĕçтерессине хăйĕн тўпине кĕртет. Хулари электросеть унăн мăшăрĕшĕн, Ирина Алексеевнашăн та иккĕмĕш çурт пулса тăнă, вăл унта çирĕм çул вăй хурать, хăйĕн юбилейне те диспетчер пульчĕ умĕнче кĕтсе илнĕ. Малтан 10 çул контролер пулса ĕçленĕ, çавăн чухлех - диспетчерта.*

*Ку служба - предприятире чи яваплисенчен пĕри: диспетчер çутă ăçта сўнни çинчен пĕлмелле, çакăн пирки предприятие тата организацие вăхăтлă асăрхаттармалла, нарядсем памалла. Ирина Алексеевна хăй ĕçне тĕплĕн пĕлет, ĕçтешĕсемпе те килĕштерет. Хăйĕн ĕç юбилейне вăл коллективпа пĕрле палăртнă, хăйне хисепленине, тейлĕ пулнине туйнă.*



*Н. Азизов сăнўкерчĕкĕнче: И.А.Тверскова диспетчер.*

## "Ĕлĕкхине пĕлмесен, малашлăха тума çук"

Çакăн пек темăпа районти культура çуртĕнче район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пайĕ комсомола йĕркеленĕренпе 80 çул çитнине халалланă каç ирттересшĕн.

Унта районти комсомол комитечĕн ертўçисем пулнисене тата хальхи лидерсене - вĕренў комитечĕсен, шкул Совечĕсен председателĕсене чĕнĕç, унăн девизĕ çак сăмахсем пулĕç: "Лидер-лидера".

Хальхи вăхăтри çамрăксемшĕн комсомол сăмах пит пĕлтерĕшлех мар, анчах та хăш-пĕр йăла-йĕркесене çĕнетсе яни усăллă çеç пулĕ, тесе шутлать çамрăксемпе ĕçлекен пай заведующийĕ Р.Бикинеева.

Çакна тĕпе хурса районти культура çуртĕнче концерт, КВН - ассорти ирттерме, хулари шкулсенче вара волейбол вăййисен ăмăртăвĕсене йĕркелеме планлаççĕ.

*КВНсем малалла пыраççĕ*

## "Эпир Якуркелĕнчен" - çĕнтерўçĕсем

Район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пайĕ "Ялта кама пурăнма лайăхрах?" темăпа ялти çамрăксем хушшинче хаваслисемпе тавçăруллисен клубĕн I турне малалла ирттерет. Иртнĕ эрнере Хуралтăвĕнче 4 команда ăмăртнă, вĕсем хушшинче Селенкĕшри "Металл", Якуркелĕнчи "Эпир Якуркелĕнчен", Мамăкран "Çичĕ çынлă чаплă ушкăн", Хуралтăвĕнчи "Чăваш тата К". Пĕрремĕш конкурс - "визиткăра" яшсенчен кăна тăракан "Чăваш тата К" команда тавçăруллă пулнипе палерчĕ. Жюрипе куракансем вĕсен артист пултарулăхне пысăка хурса хакларĕç. Яшсене çĕнĕ чăвашсем тесе ят пачĕç. Тепĕр - музыка конкурсĕнче вĕсене "Эпир Якуркелĕнчен" команда çĕнтерчĕ, номер темăпа килĕшсе тăмасчĕ. Якуркелсем вырăнти материалпа пĕлсе тата туллин усă курма пултарчĕç. Ирĕклĕ темăпа "килти ĕç" пурнăçланипе те вĕсем палăрчĕç, вĕсен номерĕсене чи интереслĕ тесе хакларĕç. Юлашки конкурс - капитансен конкурсĕ çĕнтерўçе палăртрĕ, Г.Терентьева капитан хăйĕн командине мала кăларчĕ.

Иккĕмĕш вырăна тивĕçлипех "Çĕнĕ чăвашсем" йышăнчĕç. Виççĕмĕш вырăна ытти командăсем уйăрчĕç.

## Субботника хутшăнчĕç

Хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕнче кăçал сахăр кăшманне çĕнĕ технологипе ўстерсе çитĕнтерчĕç. Чăнах та ĕнтĕ, ытти çулхисемпе танлаштарсан, ăна район центрĕнчен инçе вырнаçнă çак хуçалăхра кăçал сахалтарах акрĕç.

Çĕнĕ технологи лайăх ĕнтĕ, анчах ăна кăларнă вăхăтра алă вăйĕпе усă курмалла. Хуçалăх ертўçисем ялта пурăнакансене субботника хутшăнма ыйтрĕç. Яланхи пекех К.Каримова, А.Самерханова, Ф.Калимуллина, А.Мутагиров, Ф.Махмутов, Ф.Самерханов пенсионерсем активлăх кăтартрĕç. Шкулта вĕренекенсемпе учительсем те аяккинче юлмарĕç, вĕсем ытти кунсенче те сахăр кăшман хирне пулăшма çўреççĕ.

**С.ФАТХУТДИНОВА.**

*Хĕлле çитмен-ха*

## Сехет йĕпписене октябрьте куçаратпăр

**Кăçал сехетсене хĕллехи вăхăта сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче мар, октябрĕн 25-мĕшĕнче пĕр сехет каялла куçарăпăр.**

Раççей 3 çул ĕнтĕ "Европа графикĕпе" пурăнать, унта сехетсен йĕппisене "хĕллене" октябрь уйăхĕн вĕçĕнче çеç куçараççĕ.

Мĕнле пулсан та кĕркуннехи çанталăкăн тата çывхаракан хĕлĕн паллисене туятпăр ĕнтĕ. Хĕл вара кăçал сивĕ пулĕ.

## Пĕчĕк фермăн пысăк пулăшăвĕ

Шкул-интернатăн пĕчĕк ферми çак йывăр вăхăтра хăйĕн воспитанникĕсене пысăк пулăшу парать. Кунта районти хуçалăхсенчен çулталăкне икĕ хут 10-15-шер çура илеççĕ, килĕшў туса вĕсене икĕ ача пăхать. Сыснасене апат юлашкисене çитереççĕ, çаплах вĕсене валли комбикорм туянаççĕ.

Нумаях пулмасть ферма валли хресченсен хуçалăхĕсен "Восход" ассоциацийĕнчен тата 11 çура илсе килнĕ, каччăсем вĕсене çĕнĕ çул уявĕччен кирлĕ пек самăртма вăй-халне шеллемеççĕ.

Пасартинчен йўнерех аша шкул-интернат ĕçченĕсене те сутаççĕ, укçипе вара кирлине туянаççĕ. Укçа-тенкĕ тĕрлĕ мероприятисем ирттерме те кирлĕ. Çапла, нумаях пулмасть шкул администрацийĕ Ватăсен тата Учитель кунĕсене 50 яхăн ветерана чĕннĕччĕ, вĕсем тăван коллективра тĕл пулма савăнсах килĕшрĕç.

* * *

Кăçал çĕрулми нумайăшĕн лайăх çитĕнмен. Шкул-интернат та ăна Сабинск районĕнчен 8 тонна туяннă, сысна ашĕ сутса тунă укçапа тўлесе татнă. Тата интернат ĕçченĕсемпе ашшĕ-амăшĕсенчен 1 килограмне 60 пуспа 2 тонна туяннă. Тăлăх ачасем те хăйсен тăванĕсенчен пĕрер витре çĕрулми, кăшт кишĕр тата ытти пахча çимĕç илсе килнĕ.

Интернатăн, кивĕ пулсан та, пахча çимĕç упрамалли хăйĕн вырăнĕ пур. Кăçал ăна юсанă. "Хĕле валли хатĕрленĕ пахча çимĕç лайăх упранĕ", - тет шкул-интернат директорĕ В.Е.Ефимов.

*Раççейре, тĕнчере*

### Çитес çул та йывăр килĕ

Ставрополь крайĕнче кăçал нихçанхинчен типĕ çанталăк тăчĕ, утă уйăхĕнчен тытăнса юпа уйăхĕччenех пĕр тумлам çумăр ўкмерĕ. Специалистсем палăртнă тăрăх, çитес çул ларутăру тата йывăртарах пулĕ. Кăçалхи кĕркунне типсе кайнă çĕре акнă кĕр тыррисем шăтса тухаймĕç. Кăçал Ставрополь крайĕнче Раççейри пĕтĕм тулăн 10 процентне пухса илнĕ, тепĕр çул вăл çĕршыва тĕш тырăпа тивĕçтерейме пултараймĕ.

### Пĕртен-пĕр электростанци çунса кайнă

Кăçалхи юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче пушара пула Шикотан утравĕ çинчи Крабозаводское поселокĕнчи пĕртен-пĕр электростанци çунса кайнă. Граждан оборони тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен управленин районти пайĕн пуçлăхĕ Валерий Домашов пĕлтернĕ тăрăх станцире пĕр генератор çунса кайнă. Электростанци поселока тата пулă тирпейлекен пысăк комбината электроçутăпа тивĕçтерсе тăнă. Хĕл çитес умĕн пысăк инкеке лекнĕ поселок çыннисем Мускав пулăшасса кĕтеççĕ.

### Савăт-сапа кăларса йăлăхнă пулас

Совет Союзĕ арканса кайнă хыççăн Тбилисири авиаци пĕрлешĕвĕ пысăк йывăрлăха кĕрсе ўкнĕ. Çак чаплă предприяти алюминирен савăт-сапа хатĕрлеме тытăннă. Хальхи вăхăтра пĕрлешў ертўçисем каллех самолет туса кăларассине чĕртсе тăратма хăтланаççĕ. Вĕсем СУ-25 йышши штурмовик никĕсĕ çинче çĕнĕ йышши истребительсем туса кăларма май шыраççĕ. Çак тĕллевпе Тбилисири авиаци пĕрлешĕвĕнче производствăна çĕнетмешкĕн 20 миллион доллара яхăн укçа кирлĕ пулать. Пĕр истребитель хакĕ вара, малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, 25 миллион доллара яхăн шутланать.

/ИТАР-ТАСС/

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тўлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

# Вут-çулăмăн алли вăрăм

Чурапаттăр ялĕнче хăрушă пушар пулнă хыççăн уйăх ытла кăна иртрĕ-ха. Юлашки вут-пуççисем сӳнса пĕтнĕ, анчах та çынсен хуйхи уçă суран пек йынăшать. Пилĕк çемье хĕл умĕн çуртсăр, пурнăç тăршшĕпе пуçтарнă пурлăхсăр, выльăх-чĕрлĕхсĕр, тумтирсĕр, апат-çимĕçсĕр тăрса юлнă.

Çапах та фотограф объективĕ умĕнче вĕсем хăйсене лăпкă тытма ăçтан вăйхал çитерессĕ-ши? Çакăн пек йывăр вăхăтра çирĕп кăмăллă пулма мĕнле пултарассĕ-ха?







Кунта пĕр хурав: вĕсем çынсем хĕрхенессе, ыркăмăллăх çĕнтерессе шанаççĕ. Çак çынсен пичĕсем çине тимлĕрех пăхăр-ха, ку чăнах та çапла пулнине ăнланатăр.

... Ку уйăх çунса кайнă çурт хуçисемшĕн вырнаçас, майлашăнас ĕçсене пурнăçланипе иртсе кайнă. Хăшĕ-пĕрисем тăванĕсем патĕнче пурăнаççĕ, хăшĕсем - ентешĕсем патĕнче. Хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕ вĕсене малтанлăха пĕрер михĕ çăнăх, вуншар килограмм аш уйăрса панă. Ырă çынсем кил-çуртра тыткаламалли ăпăр-тапăр, тумтир пырса параççĕ.

Яланхи пекех, çынсем районти влаçсене çирĕп шанаççĕ. Акă кунта та, çĕнĕрен çурт хăпартас текен 4 çемьене тӳлевсĕр, район бюджечĕн шутĕнчен 50 кубла метр йывăç уйăрса панă, пурне те çăмăллатнă хакпа (каллех бюджет урлă) кăмрăк çыртарса панă, пурлăх енчен пулăшма ыйтнă заявленисене те çитес çывăх вăхăтра район администрацийĕнче пăхса тухĕç.

"Росгосстрах - Татарстанăн" Нурлатри филиалĕ те çурчĕсем çунса кайнă çынсене хăйсен хуйхипе пĕччен юлма паман. Экспертпа страховани мероприятийĕсене ирттернĕ хыççăн филиал кĕске вăхăтра тăкакăн хакне палăртнă. Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче филиал директорĕ Адлер Ибрагимович Газизуллин инкек тӳснисене пурĕ 103 пин тенкĕ пособи панă (ӳкерчĕкре шăпах çак самант). Ун хыççăн "Госстрах" коллективĕ Чурапаттăр ялне килте кирлĕ вак-тĕвек япаласем, тумтир, вырăн таврашĕсем леçсе панă. Ыркăмăллăх рейсĕ çакăнпа вĕçленмĕ-ха: çынсен инкекне çапла çывăх курсан аяккинче тăрса юлма çук ĕнтĕ. Редакци те мĕн пултарнă таран пулăшĕ, кил-çуртра кирлĕ япаласене эпир те пуçтаратпăр. Çуртсăр юлнă çынсене пулăшас текенсем "Госстраха" е редакцие, администрацири социаллă хӳтлĕх пайне пыма пултараççĕ. Ахальтен каламаççĕ вĕт: мĕнпур халăх пулăшсан...

Тата акă мĕн çинчен каласшăн. Кăçал уйрăм секторта пушарсем питĕ нумай пулнă, уйрăмах ялта. Тăхăр уйăхра пулнă 64 "йăла" пушарĕнчен 40-шĕ яла тивет. Чылайăшĕнче çынсем нимсĕр тăрса юлнă. Вут-çулăм халăха сиен кӳни 500 пин тенке яхăн шутланать, çак суммăна "чĕрĕ" укçапа тӳленĕ. Кунта, паллах, "Госстрах" филиалăн мĕнпур коллективĕ, уйăхсерен мĕнпур йышши страхованин тĕп çăлкуçне - страховани взносĕсем кĕрессине тивĕçтерекенскер, çине тăрса, тимлĕ ĕçлет. Вут-çулăмран сыхланма, ăна сирсе яма пулать-ши? Паллах, пулать. Пĕрремĕшĕнчен, пушартан сыхланмалли хатĕрсемпе тивĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ, иккĕмĕшĕнчен, кун çинчен уйрăм каламалла пулĕ: хаçат страницисенчен те, çӳлĕ трибунăсенчен те.

Вут-кăварпа калаçса татăлма çук, ăна шывпа сӳнтерме çеç пулать. Вутпа шывăн алли вăрăм, вĕçерĕнсен ярса тытма çук, теççĕ...

**Д.ТЯМАЕВА.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсенче: Чурапаттăр ялĕнчи çуннă çуртсен вырăнĕсем; кунта килекен кашни çын шанăç çурат...**

# Ĕçчен пурнăç хисепне курать

**Лайăх çынсем çинчен**

"Лашана сиккипе пынă чух чарать, çунакан çурта кĕрет", - теççĕ вăйлă та хăюллă вырăс хĕрарăмĕсем çинчен. Надежда Алексеевна Мельникована та çавăн пеккисен шутне кĕртме пулать. Элеваторта, вăл ĕçленĕ çĕрте вагонсене михĕсем мĕнле тиенине халь те тĕлĕнсе аса илеççĕ-ха, вĕсене арçынсем те пурте тенĕ пекех çĕклеймен.

Надежда Алексеевна Самар облаçĕнчи Кушкă районĕнчи Романовка ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вĕсен çемйинче 8 хĕр пулнă, çавăнпа та вĕсене ачаранах арçын ĕçне пурнăçлама тӳр килнĕ. "Вăл вăхăтра хуçалăх председателĕ пулса тутар ĕçлетчĕ. Вăл ĕçчен çынсене хисеплетчĕ, пирĕн çемьене ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне илсе кăтартатчĕ", - аса илет вăл.

Надежда Алексеевна Волжск ГЭСне тунă, çулсене асфальт хывнă, вăрман каснă çĕре хутшăннă... 1970 çултанпа вăл Нурлатра, элеваторта ĕçленĕ. Çак çулсем хушшинче унăн вăйлă аллисем витĕр хамăрăн тата кӳршĕ районсенчен илсе килнĕ миçе тонна тырă иртмен пулĕ.

Кунта, Нурлатра вăл хăйĕн пулас шăпине тĕл пулнă; пĕрремĕш упăшки вилнĕ хыççăн вăл виçĕ ачапа тăрса юлнă, кайран Михаил Иванович Мельникова качча кайнă, унăн та икĕ ача пулнă. Пĕрле пурăнма тытăнсан вара вĕсен хĕр çуралнă. Хальхи вăхăтра вĕсен ачисем тĕрлĕ çĕрте пурăнаççĕ: Камчаткăра, Улан-Удэре, Тольяттире, Украинăра. Вĕсем хăйсен ашшĕпе амăшне манмаççĕ, çыру çыраççĕ, хăнана килеççĕ, пурлăх енчен те пулăшаççĕ.

Шел пулин те, пирĕн патшалăхра этем хăть мĕнле тăрăшса, вăйне, сывлăхне шеллемесĕр ĕçлесен те унăн ĕçне вăхăтлă хак памаççĕ çав. Акă Мельниковсем те чылай вăхăт хушши Куйбышев урамĕнчи кивĕ йывăç çуртра пурăннă, ачисене те çакăнтанах ăсатса пĕтернĕ. Çавăнпа та ватлăхра çĕнĕ çуртра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер панă куна Надежда Алексеевна чи телейли тесе шутлать. Туй, ачасем çурални, çаксем пурте асран тухмаççĕ, пысăках мар, анчах та мĕнпур енчен хăтлă хваттер панăшăн вăл элеватор директорне А.Н.Минизова халĕ те тав тăватьха.

Надежда Алексеевнана темиçе çул хушши пĕлетĕп ĕнтĕ, ăна кашни тĕл пулмассерен эпĕ унăн ырă та тӳрĕ кăмăллăхĕнчен, ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнетĕп. Халĕ те вĕсем - пурнăçĕ тăршшĕпех столяр пулса ĕçленĕ мăшăрĕпе, килте аллисене усса лармаççĕ. Надежда Алекссевнан электричествăпа çăм арлакан урапи пур, вăл унпа çынсем валли те арласа парать, çыхать, çапла майпа мĕнпур çемйине тăхăнтартать. Вĕсен хваттерĕнче яланах хăнасем пулаççĕ, тусĕсем, пĕлĕшĕсем пуçтарăнаççĕ.

Юлашки хут Надежда Алексеевнана эпир вăл 65 çул тултарнă кун тĕл пултăмăр. Хальхи йывăр вăхăта пăхмасăр, вăл малтанхи пекех хаваслă та тараватлă, пурнăç начар тесе ӳпкелешме хăнăхман. Надежда Алексеевна, яланах çапла пулăр.

**Ф.ГАЛИМОВА.**

## Сиплĕ курăк

***Пирĕн лавккара кориандр "çăнăхĕ" сутаççĕ. Мĕн тума юрăхлă вăл?***

***М.ПЕТУХОВА.***

КОРИАНДР - пирĕн çĕршыврах, уйрăмах кăнтăр енче акса ӳстерекен курăк. Унтан эфир çăвĕ юхтарса илеççĕ. Çавăн пек çăва юхтарса илме вĕреничченех ăна уçă та тутлă апат валли, çавăн пекех эмел тумалли курăк валли ӳстернĕ.

Кориандр çулçи тутлă шăршăллă, çак çулçăпа тăтăшах усă куракансем ăна питĕ хăвăрт хăнăхса çитеççĕ. Грузипе Арменире вара кориандр çулçине яшка тата ашкакайпа пахча çимĕç апачĕсем çине тутлăлантарма яраççĕ.

Кориандр çулçине çăкăрпа çыртса çиме те юрать. Унăн вăррипе кондитер изделийĕсем, аш-какай консервисем, тĕрлĕ маринад хатĕрленĕ чухне усă кураççĕ. Çак ӳсентăран С витаминпа, каротин, рутин тата ытти тĕрлĕ витаминпа пуян. Çавна май вăл цингаран (витамин çитменнипе пулакан чир) сывалма лайăх пулăшать. Халăх медицининче кориандр вăррипе хырăмлăх чирĕсенчен тата шăнса пулнă чирсенчен сывалнă чухне усă кураççĕ.

# ТАНТĂШ

## Еткерçĕсен Союзĕ - пуласлăхри утăм!

***Октябрĕн 6-мĕшĕнче ачасемпе çамрăксен центрĕн базиçинче шкулсенчи аслă вожатăйсен районти семинарĕ иртнĕ. Кунта еткерçĕсен Союзĕн "Тутарстан виççĕмĕш пинçуллăхра" программин "Пуласлăха утăм" ятлă иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланнă, ăна ООН ача прависем çинчен конвенци йышăннăранпа 10 çул çитнине халалланă.***

***Çак конкурссем иртеççĕ:***

### 1. Халал тропĕсем

Атăрь-ха, еткерçĕсен сăваплă сăмахĕсене аса илер: Çирĕп пул!

Малашлăх çинчен шутла!

Еткерпе усă курма пĕл!



Пĕрлĕхре вăй! Вĕсем сана е санăн тусусене йывăр самантра пулăшрĕç-и? Тен, çак асамлă сăмахсемпе санăн юратнă литература геройĕсем усă курнă пулĕ?

Тен, хăвăн отряд историйĕнче вĕсемпе çыхăннă легенда пур-тăр?

Еткерçĕсем сăмаха эсĕ мĕнле ăнланатăн? Санăн отряду вара? Пире хăвăн шухăшусене пĕлтер. Вĕсемпе юрă, сăвă е легенда хывсан вĕсене ӳкерчĕксенче, сăнӳкерчĕксенче кăтартсан тата лайăхрах пулнă пулĕччĕ. Çак конкурсра çĕнтерекенсене "Мирас-99" лагерь кĕтет.

### 2. СНТ XXI ĕмĕрте

- Тутарстан еткерçисен Союзĕн малашлăхне эсир мĕнле куратăр? Çак конкурс сирĕн тата ачасен фантазине палăртма май парать.

- Шкулсенче ачасен организацийĕн пухăвĕсем, каçĕсем иртекен пӳлĕмсем мĕнле пулмалла?



- Организаци обществăра мĕнле вырăн йышăнмалла?

Çак конкурс çĕнтерӳçисене СНТăн черетлĕ республика слетне чĕнĕç.

### 3. Хирĕç утăм

Пирĕн конкурссене хутшăнса, хăвăр ялăра, хулăра тĕплĕн тишкернĕ май сирĕн умăра чылай ыйту тухса тăчĕ пулĕ. Сирĕн патăрти çынсемшĕн йĕркеленĕ усăллă мероприятисене хутшăнăр. Пулăшу пама тăрăшăр. Пирĕн организаци девизĕ: "Пĕр кун та ырă ĕçсĕр ан иртгĕр!" Пурнăçланă ĕçсем çинчен пире пĕлтерĕр. Конкурсра çĕнтерннисене" - "Бинилект-юниор" профиллĕ сменăна чĕнĕç.



### 4. Хăтлăх - хамăр алăпа

***Паян эсир ачасем, ыран вара - çитĕннĕ çынсем. Апла пулсан, малашлăхра çĕршыва паянхи ачасем ертсе пырĕç. Çĕршыв хуçисем вара ăста пулмалла. Эсир хăвăр туни сире кăна мар, ыттисене те савăнтартăр. Шухăшласа кăларма ан ӳркенĕр. Тата. Ăстаçăсем тунă япаласене ӳкерсе илсе пире ярса парăр, вĕсем çинчен хăвăр шухăшăра çырăр.***

***Конкурс çĕнтерӳçисене "Робинзон" лагерь кĕтет.***

### 5. "Тусăмăн портречĕ"

Пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме туссем кирлĕ. Сирĕн кашнин тус пур ĕнтĕ. Çак конкурса хутшăнса эсир хăвăрăн чи çывăх тусăр çинчен каласа пама пултаратăр. Фотоальбом е видеосюжет, тĕрлĕ ӳкерчĕксемлĕ калав çырма пулать. Çĕнтерӳçĕсене "Продолжение" лагерьте кĕтетпĕр.



### 6. "Пире пысăк ĕçсем кĕтеççĕ"

Çак конкурса ачан прави çинчн конвенци йышăннăранпа 10 çул çитнине халалланă, вăл отрядсем хушшинче иртĕ.

**Конкурс тĕллевĕсемпе задачисем:**

- Ачасен обществăлла организацийĕсен ĕçне вăйлатмалла.

- СНТ отрячĕсен ĕçĕн меслечĕсемпе формисене тĕпчесси тата вĕсене сарасси.

- Ачасемпе çамрăксен йĕркелӳçĕ пултарулăхне аталантарасси.

**Республика конкурсĕ III тапхăрпа иртĕ.**

**I тапхăр** - шкул дружинисенче.

**II тапхăр** - районта.

**III тапхăр** - республика шайĕнче.



Итогсене 1999 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмлетĕç. Еткерçĕсен отрячĕсен чи лайăх представителĕсем 1999 çулхи апрель уйăхĕнче Арскра пухăнĕç. Вĕсене йăлана кĕнĕ çуран поход кĕтет - тутар халăхĕн аслă поэчĕн Г.Тукайăн тăван çĕршывне. Çĕнтерӳçĕсене Хисеп грамотисемпе наградăлĕç, "Еткерçĕсен чи лайăх отрядне" палăртĕç.

**Конкурсăн I, II тапхăрĕсене иртгермелли канашсем:**

**1-мĕш утăм.** Отряд кĕтесĕ (уголок) еткерçĕсен Союзĕн визит карточки пулса тăрать. Ăна капăрлату тăрăх кăна мар, содержани тăрăх та хаклĕç.

**2-мĕш утăм** - Мĕнле пурăнатăн отряд? Пухусем час-часах тата интереслĕ иртеççĕ-и? Еткерçĕсем мĕнле вĕреннĕ? Хăйсен кĕçĕн тусĕсене-йĕрлевçĕсене пулăшаççĕ-и вĕсем? Дружина совечĕ отряд ĕçĕсене хутшăнмалла.

**3-мĕш утăм** - отряда ĕçе лайăх йĕркеленĕ пулсан кĕтес пулни кăна çителĕксĕр. Отряд хаçатне кăларни те ытлашши мар.

**Дружина совечĕ çак хаçатсен выставкине е конкурсне йĕркелеме пултарать.**

**4-мĕш утăм** - "Робинзонада" - еткерçĕсен специальноçĕсен смотр-конкурсĕ. Иртгермелли правилăсене "Тутарстан III пинçуллăхра" программăн "Робинзон" проектĕнче çырса кăтартнă.

**5-мĕш утăм** - еткерçĕсен отрячĕсен районти конкурсĕ.

***МĔНПУР ЫЙТУСЕМПЕ ÇАК АДРЕСПА ПЫМАЛЛА: СОВЕТСКАЯ УРАМĔ, 96. АЧАСЕМПЕ ÇАМРĂКСЕН ЦЕНТРĔ.***

## Вăя тĕрĕслетпĕр

***Шкул ачисем валли хатĕрленĕ ятарлă кăларăмри çĕнĕ рубрикăна çакăн пек ят патăмăр. Вăл пĕлтĕрхи "Çамрăк корреспондентăн" малалли пулĕ, кунта вара журналист пулас текенсен заметкисене çеç мар, сăвăсем те, кăсăк сюжетлă сочиненисем те, сăнӳкерчĕксем те, ӳкерчĕксем те йышăнăпăр. "Вăя тĕрĕслетпĕр" рубрикăна кашни хутшăнма пултарать. Хăвăр ĕçĕре "Туслăхăн" ятарлă страницинче курас тетĕр пулсан, çырăр.***

***Паян эпир Нурлатри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекене сăмах паратпăр.***

СОЧИНЕНИ - ЮМАХ

### "ШĂНĂР КУРĂКĔ"

**Фанис Файзутдинов, 4"Б" класс.**

Ĕлĕк-авал пурăннă тет вăрман хуралçи хăйĕн пĕчĕк хĕрĕпе. Вĕсем туслă пурăннă, нихăçан та кичeнмленмен. Пĕррехинче çуркунне вара вĕсене хуйхă килсе çапнă. Вăл вăхăтра вăрман хуралçин ĕç нумай пулнă. Иртен пуçласа каçчен вăрманта çӳренĕ. Çурхи ăшă, ултавлă хĕвел пăхать - шăрăх, хывăнатăн та - шăнса каятăн. Вăрман хуралçи те шăнса чирленĕ. Вĕриленсе каять, вăйлă ӳсĕрет. Пĕчĕк хĕрĕ ашшĕне пăха-пăха ывăнса çитнĕ, чирĕ вара иртмест, канаш та никамран ыйтма çук. Чи çывăх яла та пĕр виçĕ кун утмалла, çурхи шывпа вара эрнере те çитеймĕн. Хĕрача хуйха ӳкнĕ. Пусма çинелар çăхан ларнă. Хĕрачаран ыйтать: "Хуйхăратăн-и? Вăрман чăтлăхĕнче ватă карчăк пурăнать. Унăн асамлă шыв пусси пур".

Чăтлăха кайма хăрушă, анчах та мĕн тăвăн? Хĕрача çула тухнă. Нумай-и, сахал-и утнă пĕчĕк хĕрача, аллисене чĕртерсе, урисене ыраттарса пĕтернĕ, çапах пӳрт патне çитнĕ.

- Аван-и, ватă асанне? Эпĕ санран пулăшу ыйтма килтĕм.

- Мĕнле чĕрĕ хĕрача, ман пӳрте тупрĕ, вăрманта аташса каймарĕ, алли-урине суранласа пĕтернĕ, анчах ӳпкелешмест, - тĕлĕннĕ тухатмăш. - Шывне пама пулĕха ăна, анчах малтан ху пулăш мана. Пӳрте тирпейле, çăм арла тата апат хатĕрле. Хĕрача пĕчĕккĕ пулсан та ĕçе хăнăхса ӳснĕ. Вăл пурне те ăста. Пĕр самантра тирпейлесе тухнă. Ĕçсене вĕçлесен хĕрача çапла ыйтнă:

- Сиплĕ шывне паратăн-и ĕнтĕ халь? Тухатмăшăн парасси те килмест, анчах та апла тăваймасть, мĕншĕн тесен авалхи йăлапа, этем виçĕ ĕç пурнăçласан вăл ыйтнине тумалла, унсăр асамлăх вăйĕ пĕтет те асамлă шывран ахаль шыв пулса тăрать.

- Юрĕ эппин, ил. Анчах çапла калаçса татăлăпăр: шыв илме тепĕр хут килсен ман пата пурăнма юлатăн. Хăй вара хĕрачана çиелтен пăхма лайăх, çирĕп, тĕпĕнче вара пĕчĕк шăтăклă чӳлмек парать. Хăйĕн пӳрчĕ патне çитнĕ çĕре чӳлмек тĕпĕ курăнса кайнă. Чӳлмек шăтăк пулнине çакăнта кăна курать хĕрача. Вĕри куççульпе йĕрсе ярать вăл, кукленсе ларать те курах каять: юлашки тумлам ӳкнĕ вырăнта çавра, тĕттĕм симĕс çулçăллă курăк ӳссе ларать. Çаврăнса пăхать те - çакăн пек курăксем сукмак тăрăшшĕпех курăнаççĕ. "Тен, вĕсене асамлă шывăн вăйĕ куçнă?" - шутланă хĕрача. Пĕр çулçине татса илет те суранланнă алли çине хурать - ыратни иртсе каять.



Хĕрача савăнсах хаять, тухатмăш патне таврăнмалла мар вĕт халь. Ашшĕне вăл сиплĕ курăка вĕретсе ĕçтерет. Часах вăрман хуралçи чĕрĕлет, вĕсем малтанхи пекех лайăх пурăнма тытăнаççĕ. Çавăнтанпа вара çак курăкпа ӳслĕкрен сывалаççĕ, унпа сурансене сиплеççĕ. Вăл çулсемпе сукмак хĕррисенче ӳсет. Ячĕ вара - шăнăр курăкĕ.

# Тăван ялăм çинчен сăмах хускатрăм...

***Кама кăсăклантарман-ши хăвăр пурăнакан ял ячĕ? Ăçтан пулса кайнă-ши ун пек е кун пек ят? Хăш вăхăтра, миçемĕш çулта пуçланнă-ши? Мĕнле çынсем пулнă-ши çак вырăнта пĕрремĕш çурт лартакансем?..***

***Малалли калаçу Тутар Республикин Нурлат районне кĕрекен Уксăмлă ялĕ çинчен. Ăçтан тата хăçан пуçланса кайнă-ха вăл? Çакна тĕпчесе пĕлес тесе ял çыннисемпе курса калаçма тата тĕрлĕ литературăпа усă курма тиврĕ.***

**Уксăм** сăмах пĕлтерĕшне М.И.Скворцов редакциленĕ пысăк словарьте икĕ сăмахпа каланă - дикий чеснок. Н.И.Ашмаринăн 17 томлă Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче (1929ç) III томĕнче 200-мĕш страницинче çапла каланă: Уксăм (уксым), растение, похожее на дикий лук; листья пошире и вкус нежнее.

**Уксăм,** род дикого чеснока.

Тата тепĕр ăнлантару пур, анчах унта Уксăн тенĕ. Сăмахри М саспаллине Н саспаллипе улăштарни вырăнти калаçу уйрăмлăхĕ пулĕ е уйрăм çын калаçăвĕ çеç (ун пекки те пулма пултарать). Пĕлтерĕшĕ хăйĕн Уксăм сăмахăнни евĕрех:

**Уксăн,** название растения. Сухан пек çиекенни, çиеççĕ çулçине; сарлака хăйăхлă. Юнашарах çавăнта:

**Уксăмлă**, назв. дерев. Уксумла, Чист.У.// Название поля (хир).

**Уксăмлă çырми**, назв. речки. Чув Менча. Чист.у.

**Уксăмлă шывĕ,** речка Б. Аксумла Чист.у. Сăмахĕсене хăш вырăнтан çырса илнине пăхсан, пурте (уксăнсăр пуçне) пирĕн вырăнтанах иккен.

Уксăм сăмахпа çыхăннă ял ячĕ те, хир ячĕ те, шыв ячĕ те пур. Çитменнине тата пирĕн тăрăхра çав ятпа çыхăннă çырма ячĕсем пĕрре çеç кăна та мар: Мал.Аксумлинка, Б.Аксумлинка.

Ялта çӳрекен юмахсăмахра тĕрлĕ çын тĕрлĕрен каласа парать Уксăмлă ялĕ епле пуçланса кайни çинчен. Федорова Зинаида Николаевна, ялта ăна пурте Çинкка аппа теççĕ: "Асатте каласа паратчĕ, ăна вара хăйĕн аслашшех каласа панă. (Çинкка аппа хăй 1920 çулхи, унăн ашшĕ 1883 çулхи, аслашшĕ пĕр 1860 çулсенче çуралнă, аслашшĕн аслашшĕ миçемĕш çулхи?.. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче çуралнă пулать!?) Ял пуçласа ярас тесе ку таврана виçĕ çын килнĕ те, хальхи Кĕл васанĕ леш енне канма чарăннă. Йĕри-тавра сĕм вăрман пулнă. Çак вырăн виççĕшне те килĕшнĕ. Виççĕшĕн виçĕ ял пуçламалла пулнипе пĕрин çеç çак вырăна юлмалла пулнă. Кам çакăнта юлассине çапла татса пама шутланă: "Халь выртса çывăратпăр, ирхинене камăн пуçĕ вĕçне уксăм шăтса тухать - çавă кунта ял пуçлать. Чеереххи, çывăрмасăр выртса, юлташĕсем çывăрса кайсан, уксăм курăкне татса илнĕ те, çĕре çĕçĕ вĕçĕпе шăтарса, хăй пуçĕ патне чиксе лартнă. Çапла вара, вăл кунта юлса ял пуçланă, ятне курăк ячĕпе панă - Уксăмлă. Лешсем, иккĕшĕ, салтакĕ - Салтакъелне, Макçăмĕ - Макçăмьелне пуçланă тет. Пирĕн яла пуçлаканнин ятне асăнмастчĕ, салтакĕн те ячĕ паллă мар. Ятсăр пулман ĕнтĕ."

Шел пулин те, ку калаçу ял миçемĕш çулсенче пуçланса кайма пултарни çинчен темех пĕлтермест. Калаçу вĕçленсе пынă чухне çеç Çинкка аппа савăнтарчĕ, пĕр 200 çул каялла пулса кайнă пирĕн ял тесе калаçатчĕç, терĕ. Вăлах тата тепĕр интереслĕ информаци пачĕ. Уксăмлă ялне куçса килекенсем хушшинче вирьялсем те пулнă. Çакăн хыççăн, вăрах вăхăт пуçран тухман ыйту çине, хурав тупăнчĕ. Уксăмлăсене анат ен чăвашсем патне кĕртеççĕ пулсан та, ялти калаçура тури диалект сăмахĕсем пур. Тĕслĕхрен: Эсир ĕçлеттĕр, эсир шавлаттăр - тесе калаçатпăр эпир. Анатри чăвашсем кусене эсир ĕçлетĕр, эсир шавлатăр тесе каламалла пек. Уйрăмлăхĕ куçкĕретех ĕнтĕ: эсир местоименире **и** сасă вырăнне **ĕ** калаççĕ (литература чĕлхинче икĕ варианчĕпе те усă кураççĕ), тата, хальхи вăхăтри нум.хис. 2-мĕш сăпатĕнче аффиксри **т** сасă тури диалектра вăрăмланать, анатринче мар. Лексикăра та тури диалект паллисем тĕл пулаççĕ: кукамая тепĕр чухне мамай тесе чĕнни пулкалать е Коля пичче тенине илтетĕн кунта, анат диалектра (пирĕн патра) Коля тете тесе каламалла пек.

Ялти халăх хушшинче, паллах, Уксăмлă ялĕ епле пуçланса кайни çинчен юмах-халап илтнĕ çынсем татах та пур. Вĕсем те каласа пама пултараççĕ. Анчах та вĕсен калаçăвĕсем те халь илтнинчен темпех уйрăлса тăмарĕç, теприсем эпир ĕненместпĕр ун пек пулнине, халап кăна вăл, тесе хутшăнмарĕç. Çамрăкраххисем Уксăм сăмах пĕлтерĕшне те тĕплĕн ăнлансах каймаççĕ иккен.

Уксăмлă ялĕ пуçланни çинчен Василий Дмитриевич Дмитриев та хăйĕн "Чăвашсен аваллăх халапĕсем" (Чувашские исторические предания: Очерки истории чувашского народа с древних времен до середины XIX века. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1993.) кĕнекинче асăнса хăварать. Тутар Республикинче Октябрь районĕнче (халь Нурлат р-нĕ) ялсем мĕнле пуçланса кайни çинчен халăх хăй шутласа кăларнă халап-юмахсем çӳреççĕ тет. Уксăмлă çинчен икĕ тĕрлĕ, кĕскен çырса кăтартать. Пĕрремĕшĕ, II Кĕтерне патша вăхăтĕнче виçĕ салтака паттăрлăх кăтартнăшăн çав таврара çĕр уйăрса панă пулнă: Якку ятли Якаел (Якушкино), Салтак-Салтакъел (Салдакаево), Уксăм-Уксăмлă (Аксумла) ялĕсене пуçласа яраççĕ тенĕ. Иккĕмĕш халап-юмахĕнче вара, виçĕ салтак çумне Уксăмлă ялне çыпăçтарса калаççĕ тенĕ: ик çĕр çул каялла ку вырăнсене виçĕ таркăн салтак килнĕ, шурлăх урлă каçса, çĕр выртма вăрман уçланкинче вырнаçнă. Ирхине тăраççĕ те, курах каяççĕ: уçланкăна уксăм курăкĕ шăтса тулнă. Вĕсем вара çакăнта пурăнма юлаççĕ. Пĕрремĕш ялне Уксăмлă тесе ят параççĕ.

Çак пĕлтерӳсем çине автор критиклерех пăхма сĕнет пулсан та, халăхра çулăмĕ пулмасăр тĕтĕмĕ тухмасть тенĕ евĕр, пирĕн информаци пухăнать. Халь II Кĕтерне. патша хăш вăхăтра император пулнине пĕлсе, ял хăш вăхăталла пуçланма пултарнине кăшт ăнкартма пуçлатпăр. Тата тепĕр хут, пуçланă темăпа калаçма Уксăмлă çыннине, 1940 çулта çуралнă Михаил Тудьярович Ендирякова сăмах парар. Ку ялта мĕн ачаранах пурăнать, хальхи вăхăт тĕлне хуçалăхра аккумуляторщик пулса ĕçлет.

"Пире пĕчĕккĕ чухнех, пĕр вунă-вун икĕ çулта пулнă пулĕ эпир, Ухантей пичче (аслăраххисем ăна Сатти старик те тетчĕç, туллирех ячĕ унăн Сватев Угандей, 1880-мĕш çулсенче çуралнă, ун чухнех вăл 70-80 çулхи старикчĕ) ял пуçланса кайни çинчен каласа паратчĕ. Ик çĕр çул каялла виçĕ салтака нумай çул хушши хĕсметре тăнă хыççăн тата паттăрлăх кăтартнăшăн Кĕтерне патша пирĕн тăрăхра çĕр уйăрса пама пулнă. Вырăнне хăйсен суйласа илмелле пулнă. Çĕр шырама килнĕ салтаксем хальхи Уксăмлă ялĕ вырăнне, паянхи куна тĕне кĕмен чăвашсене пытаракан масар патне, çырма хĕрринчи уçланка килсе тухнă. Вăрман хушшипе çырма юхса иртекен илемлĕ вырăн пулнă кунта. Пурне те килĕшнĕ. Анчах та пĕрин çеç юлмалла кунта. Мĕн тăвас? Виçĕ тус çакăнтах çĕр выртса канма шутлаççĕ. Çапла калаçса татăлаççĕ: ирхинене камăн пуçĕ патне уксăм курăкĕ шăтса тухать - çавă кунта юлать. Ирхине вăранаççĕ те... чăнах та пĕрин пуçĕ патне уксăм шăтса тухнă. Те чăнах шăтса тухнă ĕнтĕ вăл, те чеерех пулса, хăй урăх çĕртен татса хăй пуçĕ патне чышса лартнă? Çавăнтан пуçланса кайнă тет пирĕн ял. Ятне те çав уксăм курăкĕ ячĕпе Уксăмлă панă. Тата икĕ салтакĕ вара, пĕри, кăнтăралла кайса, Березовка ялне пуçласа янă, тепри çурçĕрелле кайса Салтакъел ялне", - вĕçлерĕ хăйĕн калаçăвне Ендиряков М.Т.

Маларах каланăччĕ, ял пуçламăшĕн историне ял çыннисем пĕр евĕрлĕрех калаççĕ. Юлашки информатор тата çавăн пекех ыттисем те пĕлтернине Раççей историйĕпе çыхăнтарса пăхар-ха. Чи малтан çакна калар: калавçă (Ендиряков М.Т.) 10-12 çулхи ача пулнă вăхăтра 1950-52ç.ç. пынă. Калаври ĕççем 200 çул каярах пулнă пулсан, ял пуçланса кайнă вăхăт 1750-52 çулсемпе тĕл килет.

**Г.ЕНДИРЯКОВ.**
**Уксăмлă ялĕ.**

**(Вĕçĕ çитес номерте).**


## Пĕлтерӳсем

### Тĕрли:

***Октябрĕн 26-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 16 сехетре предпринимательсен "Пĕрлĕхре - пирĕн вăй" пухăвĕ пулать.***

* * *

***Тавар туянакансене универмаг çуртне (1-мĕш хут) пыма чĕнетпĕр. Сутлăхра: автохими, йăла химийĕ, атă-пушмак, колготкисем, аудиокассетăсем. Свидетельство Б-144.***

* * *

***7 çулхи турă лаша çухалнă, вăл ăçтине пĕлекенсене Чурапаттăр ялĕнчи Николай Колесникова пĕлтерме ыйтатпăр.***

* * *

***Калуга облаçĕнчи Жуковски районĕнчи приватизациленĕ 2 пӳлĕмлĕ хăтлă хваттере Нурлат хулинчи 2 пӳлĕмлипе улăштаратпăр. Телефон: 5-38-62.***

* * *

***Питĕ лайăх шайри ГАЗ-3307 сутатпăр е çăмăл машинăпа, апат-çимĕçпе улăштаратпăр. Адрес: Московская урамĕ, 34.***

* * *

***Н-Октябрь МСОн 1-мĕш ПМКне яланлăха ĕçлеме автокран машинисчĕ, каменщиксем, шĕвек тата газ евĕрлĕ топливăпа ĕçлекен котельнăй установкисен операторĕ (удостоверени тата ĕç стажĕ пулмалла) кирлĕ.***

### Сутатпăр:

***Туй кĕпи. Телефон: 5-24-08.***

* * *

***Линейная урамĕнче гараж. Адрес: Гагарин урамĕ, 5-21.***

* * *

***Читлĕхпе пĕрле попугай. Телефон: 5-21-58.***

* * *

***ВАЗ-2101. Телефон: 5-29-11.***

* * *

***Хула варринчи 2 пӳлĕмлĕ хваттере. Телефон: 5-17-14.***

* * *

***Елабуга хулинчи Танайка ялĕнчи хăтлă çуртăн çуррине. Хуçалăх хуралтисем, гараж, 19 сотка сад пахчи пур, газпа ăшăтмалла. Телефон: 5-14-17.***

* * *

***Мунча пури (Мамăк ялĕ). Телефон: 4-12-17, И.Морозовран ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***1992 çулта туса кăларнă, лайăх шайри ВАЗ-2106. 17 сехет хыççăн 4-42-29 номерпе шăнкăравласа Ришатран ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***1,50х1,30 метрлă чӳречесем, шифер. Тури Нурлатри Рифкат Мифтаховран ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***КамАЗ автомашина запас пайĕсем е апат-çимĕçпе улăштаратпăр. Çырчалли хули, код (8552), телефон: 58-50-78. Лицензи номерĕ 097161.***

***Хула урамĕсенче килсĕр йытăсем нумайланнипе 1998 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчен вĕсене пеме тытăнаççĕ. Нурлат районĕн МПП ЖКХ йытăсем усракан çынсене вĕсене кăкарма ыйтать. Вĕсемшĕн МПП явап тытмасть.***

***МПП ЖКХ администрацийĕ.***

## *Касса аппарачĕсен хуçисене пĕлсе тăма*

***Нурлат хулинчи ККМ техника тивĕçтерĕвĕн центрĕ 1998 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен ККМа 1999 çула техника енчен тивĕçтерме килĕшӳ тума тытăнать.***

***Килĕшӳ тума хăварпа пĕрле касса аппарачĕн паспорчĕ, регистраци даннăйĕсем пулмалла.***

***Килĕшӳсене 53-мĕш СМУ çуртĕнче кашни кун 8 сехетрен тытăнса 12 сехетчен тума пулать. 1999 çула килĕшӳ туман организацисемпе уйрăм çынсене тивĕçтермеççĕ.***



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

**Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ**

**Хаçат эрнере виçĕ хут- чен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.**

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.**

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893.